Ĕç тăвакан уголовнăй инспекцире

# Айăплавсене пурнăçа кĕртес тесе

**Майăн 7-мĕшĕнче Раççейре ĕç тăвакан уголовнăй инспекцисем йĕркеленнĕренпе 90 çул çитнине паллă турĕç.** Шăпах çавăн чухлĕ вăхăт каялла пирĕн çĕршыври кĕпĕрнесемпе облаçсен юстици пайĕсен çумĕнче ирĕксĕрлесе ĕçлеттерекен бюросем туса хунă. Вĕсем уголовнăй майпа ирĕкрен хăтармасăр айăпланисене ĕçлеттернĕ.

Паянхи кун ĕç тăвакан уголовнăй инспекцисем кашни районтах пур. Пирĕн республикăра вĕсем 25. Çак инспекцисем ĕçлесе тӳрленмелле тата обязательнăй майпа ĕçлемелле тесе айăпланă çынсен ĕçĕ-хĕлне тĕрĕслесе наказанисене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çавăн пекех инспекци ĕçĕсен шутне условнăй майпа айăпланисене, ача амăшĕ пулма хатĕрленекен хĕрарăмсене тата пĕчĕк ачасем пур хĕрарăмсене отсрочкăпа айăпланине тĕрĕслесе тăрасси тата хăшпĕр должноçран хăтарнисене, пĕр-пĕр ĕç-хĕле пурнăçлама чарнисем айăплава мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесси те кĕрет.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсен варринче ĕç тăвакан уголовнăй инспекцисем Шалти ĕçсен министерствин тытăмне кĕнĕ. Муркаш районĕнче пĕрремĕш инспектор пулса В.А. Горшков ĕçленĕ. Ун хыççăн çак должноçра О.И. Григорьев, кайран В.Г. Яковлев вăй хунă.

1994 çултанпа Муркаш районĕнчи ĕç тăвакан уголовнăй инспекцие Владимир Валерьевич Кожевников ертсе пырать. «Чăваш Республикинче ĕç тăвакан уголовнăй инспекцисем витĕр çулталăкне вăтамран 10 пине яхăн çын тухать. (Танлаштарма: ирĕкрен хăтарнисем республикипе 12 пин çынна яхăн). Пĕлтĕрхи çул пирĕн районти инспекцире учетра 298 çын тăчĕ», – пĕлтерет вăл.

Ĕç тăвакан уголовнăй инспекци судпа çӳлерех асăннă мелсемпе айăпланă кашни çынпах уйрăммăн ĕçлет. Анчах йĕркене пăсакансем хăйсем малтан хăнăхнă пек саккунпа килĕшсе тăман ĕçсене тусах пыраççĕ. Шăпах çакнашкал лару-тăрура наказанисене çирĕпрех тума ыйтса инспекци судсене представленисем тăратать те. Пĕлтĕр суд урлă 39 çыннăн айăплавĕсене малтанхинчен çирĕпрех тума йышăннă. Кăçалхи 4 уйăх хушшинче кун пек тĕслĕх 11 пулнă та ĕнтĕ.

«Хальхи вăхăтра инспекцин ĕçĕнче те йывăрлăх тупăнчĕ: айăпланисене пĕр уйăхлăх ĕçе вырнаçтарасси çăмăллăн пулса пымасть. Ку финанс кризисне пула производство калăпăшĕсем чакнипе те çăхăннă, çав вăхăтрах паспортсăр тата пропискăсăр çынсене айăпланипе те. Районти предприятисен ертӳçисем тата район администрацийĕ çак лару-тăрăва ăнланса пулăшса пыраççĕ. Куншăн вĕсене тав. Эпир муниципаллă хăйтытăмлăх майĕпе ĕçлекен предприятисемпе çеç килĕшӳсем тума пултаратпăр-çке. Ĕçлесе тӳрленмелле тунă çынсем паянхи куна инспекцире пурĕ 14. Вĕсене хăйсем пурăннă вырăнĕсенчех ĕçлеттеретпĕр. Çапла вара айăпланисем тĕрлĕ предприятисенче ĕçлесе наказанисене пурнăçлаççĕ. «Свобода», «Передовик», «Ударник», «Оринино», Ленин яч. хис., Ильич яч. хис., Чапаев яч. хис., Суворов яч. хис. хуçалăхсен, «Лидер», «Рассвет», «Вита», «Виват» пĕрлешӳсен ертӳçисене тата Вязов уйрăм предпринимателе те пире наказанисене пурнăçа кĕртес ĕçре пулăшма килĕшнĕшĕн тав тăватпăр. Малалла та çыхăну тытасса шанатпăр», – вĕçлерĕ Владимир Валерьевич хăйĕн сăмахне.

Паллах, пур чухне те тӳрех ĕç вырăнĕсем тупăнмаççĕ. Çапла вара суд йышăнăвĕсем те вăхăтра пурнăçа кĕмеççĕ. Обязательнăй майпа ĕçлемелле тунисем районти ĕç тăвакан уголовнăй инспекцире 4 çын. Кунашкаллисем ытларах чухне ĕçсене ял тăрăхĕсен администрацийĕсенче пурнăçлаççĕ. Вĕсене контроллесе тăрасси ертӳçĕсен енчен те пулса пырать. Ĕçпе тӳрленмелле туни вара витĕмлĕ майсенчен пĕри пулни ĕлĕкренпех паллă.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Вĕрентӳ

## Аслă шкулсене вĕренме кĕме

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕнче И. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетне тĕллевлĕ майпа вĕренме каяс текенсенчен заявленисем йышăнма пуçларĕç. Асăннă майпа вĕренес текенсем район администрацийĕн вĕрентӳ пайне майăн 16-мĕшĕччен паспортсемпе пыма пултараççĕ.

И. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне тĕллевлĕ майпа вĕренме каяс текенсен вара заявленисем июнь уйăхĕ вĕçленичченех çырма пулать.

Кăçалхи выпускниксем хушшинче çак аслă шкулсене вĕренме кĕрсе Муркаш районне таврăнса ĕçлес кăмăллисем сахал мар пуль тетпĕр. Апла пулсан кая ан юлăр. Малашнехи пурнăç çинчен паянах тĕплĕн шутласа тĕрĕс утăм тума вăхăт.

**А. ДАНИЛОВА,**
**район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн специалист-эксперчĕ.**

Спорт

## Шкул ачисем ăмăртрĕç

Майăн 3-4-мĕшĕсенче районти «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» патшалăх унитарлă предприятийĕн куçса çӳрекен кубокне çĕнсе илессишĕн шкул ачисен çуллахи спартакиади иртрĕ.

Малтанхи кунне çăмăл атлетикăн тĕрлĕ енĕсемпе пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсем ăмăртрĕç: 100 метрлă дистанцие чупса тухассинчен пуçласа йĕтре тĕртесси (толкание ядра) таранах. Кашни ăмăртурах хăйĕн çĕнтерӳçисем пулчĕç. Вăтам шкулсен командисем хушшинче (пурĕ 15 команда пулчĕ) пĕтĕмĕшле пухнă очкосемпе вара 1-мĕш вырăна Калайкасси шкулĕн команди тухма пултарчĕ. 2-мĕш вырăнта – Муркашри вăтам шкул, 3-мĕшĕнче – Муркашри лицей.

Тепĕр кунне старта пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсенче вĕренекенсем тухрĕç. Вĕсем те 10 тĕрлĕ ăмăртура вăй виçрĕç. Командăсем хушшинче Кашмашсем çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕç. Хыççăнхи призлă вырăнсенче – Шатракасси шкулĕпе (2-мĕш вырăн) Панкли шкулĕн командисем.

Малти вырăнсене тухнисем пурте дипломсемпе медальсене тивĕçрĕç. Çĕнтерӳçĕсен аллине вара чи витĕмлĕ парне – кубок.

Вулакан пултарулăхĕ

### Шăрпăк

Эпир лайăх ачасем,
Шăрпăк тытма хăнăхман.
Унпа вара вылясан
Пурнăç пулмасть нихăçан.
Ман сире калас килет:
Шăрпăк тытма кирлĕ мар!
Пушар пулма пултарать,
Çын пурнăçне пĕтерет.

**В. ОНЬКОВ.**

### Анне сăмахĕ

Астăватăп хама пĕчĕкрех пулнине,
Питĕ шăрпăкпа выляс килнине.
Пурнепе юнаса анне тăн панине,
Шăрпăкпа выляма юрамасть тенине.
Çав кунтан аннене эпĕ патăм сăмах
Тек нихçан шăрпăкпа вылямастăп тесе.

**В. ГЕРАСИМОВ.**

Муркаш шкулĕ, 4 класра вĕренекенсем.

Ыр кăмăллăх

# Чиркӳ тума пулăшакан – телейлĕ

Ырă ĕçсем пурнăçланма пуçларĕç. «Ударник» хуçалăхăн тĕп усадьбинче – Йӳçкассинче православи чиркĕвне тăвассипе юсавпа строительство ĕçĕсем пыраççĕ. Иртнĕ çур ĕмĕр ытла тапхăрта ку вырăнта участокри больницăра çынсене чир-чĕртен сыватнă. Ырă ĕç тунă. Малашне вара чиркӳ çынсен чунне сыватма тытăнĕ.

Чиркĕве пухăнса Турă умĕнче кĕлĕ тусан, пуçтарăнса пынă çылăхсене касарттарма май килĕ. Çыннăн кĕлетки, ӳт-пĕвĕ Таса Сывлăшпа тасалĕ. Шăмшаку çăмăлланĕ, яту хисепе тивĕçĕ.

«Чиркӳ мĕнле – халăхĕ çапла»,– тенĕ авалах. Авалтанпах чиркӳ çурчĕсене пĕтĕм халăхпа пĕрле тунă.

Хисеплĕ тăвансем! Йӳçкассинчи чиркĕве юсаса çĕнетме пулăшма ыйтатпăр! Ырă кăмăлтан çак ĕçе хăвăрăн тӳпене хывсамăр. Ялтăрса çуталса ларакан куполсен пайăркинче, чансен илемлĕ сассинче «ман тӳпе те пур-ха» темелле пултăр. Ырă ĕç тума васкăр! Пулăшакана вара Турă та пулăшать.

Йӳçкасси чиркĕвĕн прихучĕн Муркашри «Россельхозбанкри» реквизичĕсем çапла:

429534. Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юськасы, ул. Центральная, д. 60.
Р/счет 40703810811100000015
ИНН 2112390480
КПП 211201001
ОГРН 1082100000443
РФ ОАО «Россельхозбанк» в с. Моргауши.

**Йӳçкассинчи православи чиркĕвĕн прихучĕ.**



Пĕлтерӳсем. Объявления


Мир окон и дверей
29-80-60

Закажи окно! Выиграй авто!
1-5.
Консультация, замеры, демонтаж бесплатно.
Здание сельхозтехники 2 этаж 8-927-669-80-60



Акция действует с 1 апреля по 17 июля 2009 г. Розыгрыш состоится 1августа 2009 г. на площадке ТК "Мега Молл".

Скидка на окна до 25 %. Весь май москитная сетка в ПОДАРОК!

**Продается однокомнатная квартира, площадью 33 кв. м. с индивидуальным отоплением. Цена договорная. Тел.: 8-927-999-61-63.**

**Пĕрремĕш пăрулана хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатăп. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-961-344-71-64.**

**Продаю корову с двухмесячным теленком. с. Ахманеи, Иванова Нина Егоровна. Тел.: 8-960-312-31-72.**

**Продаю косилки: КС-2,8, КРР-1,85, КРН-2,1, конную; копалки: навесную, прицепную; грабли ГВК-6, конные; пресс ПР-200, навесные: опрыскиватель, сажалку. Тел.: 8-905-341-45-24.**

**Продается УАЗ-330360 2005 года выпуска, тентованный, с металлическим кузовым, цвета белая ночь. Тел.: 8-906-388-15-01.**

**ООО «Энергосервис» реализует за наличный и безналичный расчет кольца ж/б для колодцев и выгребных ям, столбы металлические и ж/б для оград, муку фуражную и ЭКД, печи банные металлические, проволоку для установки сетки-рабиц, автомашину ГАЗ-52 на запчасти, блоки к/бетонные. Тел.: 8-905-342-98-11, 60-2-39.**

**Продаю новый плуг для трактора МТЗ, ЮМЗ ПМ-4-25. Цена 40 000 рублей, торг. Тел.: 8-906-132-07-64.**


**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:230701:448, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Шупоси, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:230701, для ведения прудового хозяйства, площадью 39983 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли населенных пунтков» с кадастровым номером 21:17:091301:110, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д. Рыкакасы, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:091301, для содержания и обслуживания торгового павильона, площадью 29 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли населенных пунтков» с кадастровым номером 21:17:070801:120, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Калайкас, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:070801, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 3171 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает об опровержении объявлений, опубликованных в настоящей газете от 17 января 2009 года № 4 (7644) по поводу предоставления замельных участков в аренду для ведения лчного подсобного хозяйства:**

**- с кадастровым номером 21:17:070505:136, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:070505, площадью 5674 кв. м.;**

**- с кадастровым номером 21:17:070505:129, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:070505, площадью 5975 кв. м.;**

**- с кадастровым номером 21:17:070505:130, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:070505, площадью 5746 кв. м.**

**В связи с тем, что данные земельные участки не свободные, предоставлены ранее землепользователям на основании постановления главы Кадикасинской сельской администрации от 18 марта 1992 года № 6.**

**Участник долевой собственности Калашников Валерий Леонидович, 16.03.1970 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, с. Оточево, ул. Победы, д. 37, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Сятракасинское, на территории землепользования СХПК им. К. Иванова, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:230701 площадью 4,32 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Шатьмапосинского сельского поселения.**

**2. Калашникову Валерию Леонидовичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, с. Оточево, ул. Победы, д. 37.**

Муркаш райпо коллективĕ Опрыскьял ялĕнче сутуçă пулса ĕçлекен З.П. Борисован тăван

**АМĂШĔ**

вилсе кайнă пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Моргаушрайбыт» пĕрлешĕвĕн коллективĕ кунта бухгалтер пулса ĕçлекен И.А. Федотован

**УПĂШКИ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

СХПК им. В.И. Чапаева выражает соболезнование главному бухгалтеру Семеновой Надежде Александровне по поводу кончины сына

**СЕМЕНОВА**
**Александра Леонидовича.**

Турай шкул коллективĕ кунта завуч пулса ĕçлекен И.Н. Иванован тăван ашшĕ

**Николай Григорьевич**
**КУПРИЯНОВ**

вилсе кайнă пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.**
**ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru**

**Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.**
**Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.**

**Объем 1 усл. печатный лист.**
**Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.**
**Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.**

**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**
**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Дежурный по номеру Шапошников В.Л.**
**Номер подписан 12.05.2009 г.**
**Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3850.**

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.